Р. М. КУТЙИНА

# ВИРУК КОМУНИСКӐ

Йалсенђи театтӑрсенђе

лартмалли 3 пайлӑ пйессӑ

Ђӑваш Респуплӗкӗнђи Кӗнеке Кӑларакан Уйрӑм

ШУПАШКАР—1926

26-63

В. М. КУТЙИНА.

# ВИРУК КОМУНИСКĂ

Йалсенти театтăрсенте партмалли

3 пайлă пйессă

У. Тимохвейёва куçарнă

Ратактăрĕ М. ПЕТРОВ

ЂĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔНЂИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ

ШУПАШКАР—1926

Типография
„Чувашская Книга“
Б.-Советская 6.

Чувашлит № 1072 Напеч. 3000 экз.

## ВЫЛЂАКАНСЕМ:

1. Тикăн, 50 çулхи тăрмăш тăракан хресђен.
2. Ţарйе, ун арăмĕ, упăшкипе пĕр çуларах.
3. Çумкка, 21 çулхи ывăлĕ, усал ђир йертнĕскер.
4. Наçтук, 13—14 çулхи хăйулла хĕр.
5. Вирук, 23 çулхи хĕрĕ, ĕçлеме йуратаканскер, ăслă хĕр, хулара пурăнаţ.
6. Пăнђук, Тиxăн кўрши, 45 çулта.
7. Униççе, ун арăмĕ, тĕксĕм хĕрарăм.
8. Хĕветĕр, кўрши, лутра, хĕрлĕ çўçлĕскер.
9. Марйе, ун арăмĕ, хăйуллăскер.
10. Краçук, Çумккан йуратнă хĕрĕ, çамрăкскер.
11. Кăţаруç, ун амăшĕ 50 çулта.
12. Арăмсем.

Çак ĕç 1923 çулта пулнă.

Выђакансем йалти пек тумланмалла.

Выђас умĕн халăха пйесса çинђен ăнлантарса камшăн кам выђанине те каламалла. Тата йаçлипе ђигальнĕ çинђен те ăнлантармаллах.

## МАЛТАНХИ ПАЙĔ.

### Йалти пӳртре, çуркуннехи каç.

### 1-мĕш куранни.

**Настук** (*тӳрете умĕнте йурласа ларат*).

Еп йуратнă шур тутăран
Хĕрри кăвак пулгăрччĕ;
Еп йуратни аччанăн
Кăмăл ăшă пултăрччĕ.

Петрĕм пуç йĕппĕме хуçрăм. Ак анне пĕтерет ĕнтĕ мана, ун йулашки йĕппине илсеттĕм (*çĕлеме тытăнат*). Çук, хуçăк йĕппе нумайах çĕлеймĕн. (*Çумкка кĕрет*). Çумкка, ăçта çӳререн есĕ?

**Çумкка.** Çана мĕн?

**Настук.** Аттене куртăн-и?

**Çумкка.** Лерех сăмакункка ĕçсе ларат-ха.

**Настук.** Ех турă, киле таврăнсан каллех çапăçма тытăнат ĕнтĕ. Анне ăçта?

**Çумкка.** Епĕ вăл ăçтине ăçтан пĕлем, ăнах сыхласа çӳреместĕп-çке. (*Туртса йарат*).

**Настук.** Татах тапакĕпе шăршлантарма тытăнчĕ, туртассу килсен, урама тухса турт.

**Çумкка.** Ку мĕнле йапала! Ак мĕнле ырă шăршă шăршăлаттарам сана! Шăршлă супăнђ парам мар-и? (*Настук çине тĕтĕмне йарса*). Ме, ађам, шăршла!

**Наçтук.** Ан аташ тек. Кай та, ав хăвăн Краçукун сăмсине сывла, мана ан перĕн. Ђăнахах аннене калатăп.

### 2-мĕш курăнни.

### Тарйе кĕрет.

**Наçтук.** Анне, пăх-ха, Çумкка ман çине тĕтĕм йарат?

**Тарйе.** Ан аппалан, Çумкка, пĕђĕк ађа мар-çке. Аçу килђĕ-и?

**Çумкка.** Çук. Вĕсем пайан лава кайнă укçине илђĕç те, хал çавна уйăраççĕ. Сăмакун та ĕçеççĕ.

**Тарйе.** Ех турă, мĕн тумалла ĕнтĕ ку аçăрпа. Ĕç-и ку? Каллех мĕн пур укçине ĕçсе йарат ĕнтĕ. Тырă сутса, вутă сутса, пăрава та сутса мĕн ђухлĕ ĕçрĕ. Мĕн йапала пулђĕ ĕнтĕ ку? Çумкка, кай-ха ађам, киле çавăтса килеймĕн-и ăна ес?

**Çумкка.** Илсе килĕн ăна. Пĕрре тăхăнтарса йарсан. Пĕр кун та хăлха ђиккинђен

аванах тăхăнтартрĕ—çур сехет пуљ минтĕр-кесе çӳрерĕм.

**Тарйе.** Ку мĕнле йапала пулђĕ ĕнтĕ? Ăç-та ĕçеççĕ-ши, хам кайса пăхăттăм?

**Настук.** Ах, ђунăм, анне, ан кайсам, вăл сана хĕнесе пĕтерет,—йунлантарсах пĕтерĕ.

### 3-мĕш курăнни.

Марйе кĕрет.

**Марйе.** Ман килес. Инке, ђӳлмекне илсе килтĕм. Тавга пуç панăшăн.

**Тарйе.** Ав çавăнта лараĭ-ха. Ман каллех ĕçет.

**Марйе.** Манăн та çавах. Вĕçĕ-хĕррисĕр кӳ-пеççĕ те кӳпеççĕ. Ĕçмесĕр мĕн туђђăр: Çы-тăркка хаљ каллех пĕр пиђĕке сăмакункkине турттарса килнĕ, тет те.

**Тарйе.** Ĕлĕк ерех пур ђухне те хаљхи пек нумаĭ ĕçмен пуљ. Пуху мĕн хыççăн ĕç-месĕр таврăнмаççĕ. Манăн тата ĕçкипе çу-йăхаĭ—ђăркăп. Ĕçмессерен пĕрер кĕпе çу-раĭ. Тирпейле, тирпейле ăна,—хаљ нимĕн тăхăнтармалли те çук ĕнтĕ.

**Марйе.** Епĕ аптăраса Паçакка инке патне те кайса пăхрăм. Вăл мана ђӳхесе ĕçтерме

тымарсем парса йаҙӗ те, çук, нимӗн усси те çук. Тата паҙӑшка патне кайса килес тетӗп-ха. Ӑна тата пӗр-пӗр кӗлӗ вулаттарас тетӗп.

**Çумкка.** Паҙӑшка хӑй те хаљ арçынсемпе сӑмакунккӑ аванах кӳпсе лараҭ пуљ.

**Тарйе.** Паҙӑшкана ӗçсен те йураҭ. Унӑн çурҙӗсем ишӗлсе анмӗç. Пурӑнӑçӗ ун тӗреклӗ. Ав ӑна арçынсем мӗн ҙухлӗ çаран паҙӗç. Сахалтан та пӗр 500 пӑт утӑ пуçтарӗ.

**Çумкка.** Пӗр пиҙӗке сӑмакунккӑ анҙах паҙӗ-çке.

**Тарйе.** Есӗ улталаса ан тӑр-ха, унпӑн паман çарана, ҙиркӳ йаҙӗпе панӑ. Вӑл турӑ ӗçӗ, ҙиркӗве пулӑшмллах. Хаљ те ҙиркӗве комуниссем мӑшкӑласа пӗтерҙӗç. Турӑсӑр пурӑнас çук.

**Наçтук.** Анне, епӗ йӗппе хуçрӑм.

**Тарйе.** Çитменҙҙӗ. Мӗнпе çӗлес тетӗн ӗнтӗ. Ак ӗнсе ҙиккинҙен тӑхӑнтартса йарсан... Куçна пӑхма тунӑ пуљ-çке? Мӗн пӑхрӑн? Пуçӑнта та ахӑлтатса ларас шухӑш анҙах.

**Наçтук.** Епӗ йури хуçмарӑм-çке, вӑл хӑй шартлатса кайрӗ.

**Тарйе.** Ак епӗ хӑна шартлаттарӑпин.

**Марйе.** Халĕ йĕппине те йӳнех илеймĕн. Хуларан та улăштаракансем килмĕç. Пур йапалашăн та укçа пар, укçине таçтан илмелле?

**Çумкка.** Тытăнҫĕç шапăлтатма.

### 4-мĕш курăнни.

**Униççе.** Ҫипер çӳретĕр-и? Сан кăвас ҫусги пулмĕ-ши? Ман кăвас ҫĕресне шăши кĕрсе ӳкнĕҫҫĕ те, пĕтĕмпех кăларса пăрахмалла пулҫĕ.

**Тарйе.** Пурҫҫĕ-ха, парăп. Сан ӳссĕр мар-и?

**Униççе.** Мĕн ӳссĕр марри, пур те пĕрле пăтранаççĕ.

**Марйе.** Каллех çапăçса пĕтеççе ĕнтĕ. Ех, мăнтарăн хĕрарăм пурнăçĕ. Асаплан ĕмĕр тăрăшшĕпе. Выҫăхсем ҫухлĕ те пурăнаймастпăр. Выҫăхсене пăхаççĕ, пире... Хĕр ҫух аçу-аннӳшĕн ĕçлетĕн, çапах та вĕсем ывăлĕсенех йуратаççĕ. Каҫҫа кайма тытăнсан та, ху вăйупа тумланмалла. Каҫҫа кайсан вара, хĕрарăм пурăнăçĕ пĕтĕмпех пĕтет. Лаша пек кӳлсе йараççĕ те, çӳре вара такăнса ӳксе вилиҫҫен. Арçынсем хулана кайса та уçăлса килеççĕ, пухусенҫе те тĕрлĕ ĕççем кураççĕ. Епир çак тĕнҫере мĕне курса пурăнатпăр?

**Униççе.** Хамăр та уъмах-çке. Вĕрентекен те çук. (*Асне илсе*). Инке, сирĕн Вирукăн хыпар-хăнар пур-и?

**Тарйе** (*вăрăммăн сывласа*). Çук, нимĕн хыпар-хăнар та илтĕнмест.

**Наçтук.** Епĕ кĕçĕр тĕлĕкре киле килнĕ пек курсаттăм.

**Çумкка.** Тытăнђĕç хĕрарăмсем шапăлтатма, тулалла тухас.

### 5-мĕш курăнни.

### Çумккасăр ыттисем.

**Наçтук.** Вăл килнĕ пек те...

**Тарйе.** Ђарăн-ха, ађам. Вăл килсе кайни çулталăк çитрĕ ĕнтĕ. Ун ђух епир уппа тавлашкаларăмăр. Ашшĕ ăна çуртран та хăваласа кăларма тытăнђĕ. Хулара вăл йăлтах пăсăлса кайнă. Турра маннă. Палламалла та мар улшăнса кайнă. Килте те пĕр ерне анђах пурăнђĕ те.

**Марйе.** Сан Вируку çинђен ун ђух комуниса çырăннă тесе те калаçкаларĕç. Мĕн ђухлĕ шавламарĕç пуљ ун ђухне!

**Униççе.** Пупа вăл ун ђух мĕнле вăрçрĕ, пухура тата арçынсене йепле йатларĕ.

**Тарйе.** Çук, еп хам Вирукăма паллаймастăп. Ку хулапа саватсем ăна пĕтĕмпех пăсса пĕтерне.

**Марйе.** Çапах та вăл пире пайтах аван йапаласем çинҫен каласа ăнлантарҫĕ. Астуха: мĕнле вăл çав пĕҫĕкçĕ аҫасен çурҫĕ çинҫен каласа кăтартрĕ. Арçынна хăçан вăл шухăш пуçне пырса кĕрет. Вирук вăл ăнлатарҫĕ те çав, хамăр тăрăшаймарăмăр.

**Униççе.** Арçынсем вĕсем ун пекки çинҫен шухăшламаççĕ.

**Тарйе.** Кунтан кайсан, çыру та çырсаттăмăрҫҫĕ те, хăй патне çитмен пулмалла. Ун йулташĕ Вирукăра Капкаса йаҫĕç, тесе çырса пĕлтерҫĕ. Тĕмĕнле хулана йанă терĕç çав, нийепле калама çук—йăвăр. Çырусем те йаркаланă пуљ те, те çитеймеççĕ. Ех, пĕтĕмпех манса кайнă. Наçтук аҫам, тух-ха вылљăхсене утă пар.

**Наçтук.** Йурĕ. (*Тухса кайат*).

**Марйе.** Есир мĕнле, ывăлăра авлантарас тетĕр-и?

**Тарйе.** Ан кала та ĕнтĕ. Йăлт аптăранă. Ывăлăм çамрăкĕ те çамрăк та, тата хулара

пурăнкаласа та пĕртак пăсăлнă. Хĕрĕ хамăн кăмăлăма пит кайат̆, авлантарсан пырĕђђĕ.

**Униççе.** Ађа-пăђа тени авлансан пусăрăнат̆ вăл. Вĕсем Краçукпа пит туслă пурăнаççĕ курăнат̆.

**Тарйе.** Мĕн тума çӳрен, çӳређђĕр. Епир ђарас тесен те, вĕсем пире итлемĕç.

### 6-мĕш курăнни.

**Наçтук** (*тъупса кĕрет*). Ех, анне, атте Пăнђук пиђђепе Хĕветĕр пиђђене йертсе килет. Хăйсем пур те ӳссĕр. (*Пурте ăшаланма тытăнтъĕç*).

**Тарйе.** Ех тур, каллех вăрçă хускалат̆ ĕнтĕ.

**Марйе.** Е-ех, пирен сĕтĕрĕнђĕксем те килеççĕ.

**Униççе.** Лере ĕçсе йарайман пулмалла, кунта та сĕтĕрсе килеççĕ. Çĕр те çăтмаст̆-çке çак пĕтменсене.

### 7-мĕш курăнни.

Тихăн, Пăнђук, Хĕветĕр — пурте ӳсĕр — кĕреççĕ.

**Пăнђук.** Хĕрарăмсем, йĕркипе тăрăр!

**Униççе.** Кӳпсе çӳрет, йĕркесĕр. Мĕн çын килĕ тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳретĕн? киле кай!

**Пăнђук.** Ан шавла! Сассуна ан кăлар!

**Тарйе.** Манăн та сĕтĕрĕнсе çитрĕ.

**Тихăн.** Арăм, хăнасене хапăл ту! Сăмавар ларт!

**Тарйе.** Турăран хăра, Тихăн. Мĕн сăмаварĕ вăл? Ху та пĕлетĕн пĕр катăк сахăр та çук, пĕр пĕрђĕ ђей те çук.

**Тихăн.** Манпа ан тавлаш.

**Хĕветĕр.** Пĕртак шăнăрне ислетсе ил те.

**Марйе.** Есĕ кунта мĕн ўсĕр пуçупа сĕтĕрĕнсе çўрен. Аи̂а киле. (*Çухинђен сĕтĕрет*).

**Хĕветĕр.** Ан йанăра! Çынсемпе ларкаламха. Арçынсем йулташсем, арăмран хăтарăр-ха, йăлт пусмăрларĕ.

**Тихăн.** Ех, Хĕветĕр, есĕ те çав! Арăмна парăнатăн. Ак пăх-ха ман çине, еп хам арăма мĕнле иглеттереп. Арăм, еп кам?

**Тарйе.** Çитĕ-çке ĕнтĕ.

**Тихăн.** Еп вĕрәнтнĕ пек кала. Мĕнлеђĕха? Астумастăн-и? астумасан, епĕ аван астутарăп!

**Тарйе.** Пĕлетĕп-çке--Тихăн Иванђă Пуххăв.

**Тихăн.** Куратăр-и?

**Хĕветĕр** (*арăмĕнђен çулăнса*). Арăм, есĕ мана паллатăн-и?

**Марие**. Ӳсĕр ҫăвар ес. Ҫын умĕнҫе тавлашассăм килмест. Килте пулсан, ăтартăтăмҫҫĕ санă. Сыв пулăр, хĕрарăмсем. (*Кайат*).

**Хĕветĕр**. Мана-и? Мана-и? Еп ăна пăҫăркаса анҫах тăрап. (*Ҫăмăрне кăтартса*). Ан йанăра!

**Тихăн**. Арҫынсем—йултапсем, сĕтел хушшинелле ларăр-ха. Пăнҫук, йулашкисене кăлар-ха! Тарйе, ҫашкăсем ларт. Хăйар каскаласа хурсан та пырĕҫҫĕ.

**Пăнҫ**. (*кĕленҫе ҫăварĕнҫен ҫатса*). Ех, хăватлă йапала. Йепле хăватлă тума пĕлеҫҫĕ? Вăйлăрах пултăр тесе, тапак ҫулҫисем те хуркалаҫҫĕ, теҫҫĕ! Ӳн пекки вара пит пуҫа ҫавăрат тет!

**Униҫҫе**. Пăнҫук, аҭа киле. Еҫкелерĕн ĕнтĕ, ҫитĕ. Ыран ирех хулана вутăпа каймалла.

**Пăнҫ**. Кирлĕ мар ҫĕрте ҫĕлхӳне ан тăс. Сăтăр киле!

**Тарйе** (*Униҫҫене*). Ан тив ĕнтĕ, тата аташсах кайĕ. Еҫесе ĕҫтĕрҫҫĕ те, анҫах ан ҫуйăхтăрҫҫĕ. Униҫҫе, есĕ кайах. Епĕ хам та пăхап.

**Униҫҫе**. Кайас пуҫ ҫав. Тата тӳсеймесĕр мĕн те пулин калăн та,—пĕтĕм шăмма-шакка

çĕмĕрсе пĕтерĕ. Вĕсем, çынна хĕнес тесен, нит ђĕрĕ...

**Тихăн.** Тарйе, епĕ мĕн калапине илтмерĕн-и мĕн? Хăйар пар! (*Тарйе парат*).

**Униççе.** Ех, хупах алшăлисем, мĕн нур укçăра пĕтĕмпех ĕçсе йатăр пуљ ĕнтĕ. Налука мĕнпе тӳлĕр-ши?

**Пăнђук.** Хĕрарăмсемпе тӳлĕпĕр-ха!

**Униççе.** Ех, мĕскĕн лăстăксем!

**Пăнђук.** Униççе, асту! Тăрсан, кăтартăп!

**Униççе.** Ађамăр-пăђамăрсем çарамас ђупса çӳреççĕ. Ађасем валли кĕпелĕх илесђĕ тесе, мĕн ђухлĕ йанăрарăм,—илтĕн-и?

**Пăнђук.** Çарамас та çӳрĕç-ха. Хаљ вĕсен шухăш мар.

**Тихăн.** Мĕн вăл шăна пек сан çумна çыпçăнат? Лайăхрах тăхăнтаркаласа йар та ăна... Мĕн хĕрарăмсене пусмăрлаттарма?

**Пăнђук.** Униççе, тухса кай тетĕп! Сĕтĕрĕнђĕк, шăммуна çĕмĕрĕп.

**Униççе.** Хырăму çурăлтăрђĕ санăн, усалăн. Ман йуна ĕçсе пĕтерен ĕнтĕ. Ђун илписем есир.

**Тарйе.** Нумайђђен есир пире çаратса пурăнăр-ши, çĕр çăтмансем.

**Тихăн.** Каллех шавлама тытăнтăн-а?

**Тарйе.** Шавлатăп çав. 25 çул тўссе ывăнтăм. Хуранти шыв пекех вĕресе пурăнтăм. Йытă вырăнне те хумарăн. Çуртăнта ман çурăма виçмеп патакку та çук ĕнтĕ. Ђăнахах та çак çĕр çинђе хĕрарăм тивĕçлĕхĕ çук-ши?

**Тихăн.** Ђарăн!

**Тарйе.** Ђарăнмастăп. Хĕнессе есĕ пурĕ пĕрех мана хĕнетĕн, çавăнпа калас сăмахăмсене, сана çех мар, пĕтĕм арçын умĕнђе те калам-ха: епир, хĕр ђух, пиртен аванни те çук, анђах арăм пулсан, ађасем тусан епир выљăх шуђĕнђе те мар. Ђăнахах та есир лашăрсене арăмăрсенђен авантарах пăхатăр. Вĕсене есир кантаратăр. Пире есир хăçан кантарнă?.. Сирĕн ĕçĕрсенђе епир сирĕнпе пĕр пекех ĕçлесе пыратпăр, çитменнине тата, сире тумлантарса, хурине шуратса, арласа тĕртсе пурăнатпăр. Епир çапла тăрăшса пурăннăшăн, есир пирĕн шăлсене çĕмĕрсе пурăнатăр.

**Пăнђук.** Аташса кайрĕç.

**Тихăн.** Тарйе, хĕнетĕп.

**Тарйе.** Хĕне, есĕ хĕненине курман мар епĕ. Анђах есĕ мана ађашланине минђет

тӑвиҫҫен ҫех курнӑ, унтан вара, сан ҫӑмӑрантан пуҫне, еп нимӗн те курман. Хӗнессе хӗне те вӗлериҫҫенех хӗне.

## 8-мӗш курӑнни.

(*Наҫтук ҫупса кӗрет*).

**Тихӑн** (*сиксе тӑрса*). Есӗ ҫарӑнмастӑн и-ха? (*Аллине ҫӗклет*).

**Наҫтук** (*ун патне ҫупса пырса*). Ах, атте, аван атте, ан тив ӑна.., ан хӗне.

**Тихӑн** (*ӑна урипе тапса йарса*). Кай!

**Наҫтук** (*ашшӗ тапса йанипе шкап кӗтессине пырса ҫапӑнат*). Ах!..

**Тарйе** (*ҫупса пырса*). Ех, вӗлерҫӗ, вӗлерҫӗ аҫама путсӗр!

**Тихӑн**. Тӑн кӗрӗ-ха. Вилекенех мар.

**Пӑнҫук**. Хӗрарӑмсемпе муталашма пӑрахха. Еҫер.

**Хӗветӗр**. Еп киле кайап.

**Тихӑн**. Ех, Хӗветӗр, арӑмунтан хӑратӑп пулмалла. Е-ех, хӗрарӑмсенҫен те хӑратӑн та есӗ! Хӑвӑн хӗрлӗ сухалу кӑвапуна ҫитиҫҫенех ӳснӗ пулсан та, хӗрарӑмсенҫен хӑран.

**Хӗветӗр**. Кам хӑрат? Епӗ ӑна кукӑлҫ ӑшне ҫиксе хунӑ пек хам аллӑма ҫӑмӑртаса илеп.

**Тарйе** (*Настука тăратса*), Ан йĕр, хĕрĕм. Аҭа, аҭам пусна çыхса йарам. Ех, Тихăн, Тихăн, аҭа пусне шăтартăн-çке.

**Тихăн.** Кайăр кунтан! Курас килмест.

**Тарйе** (*сĕтел патне пырса*). Ҭун илли есĕ! Вăрă-хурах! (*Сăмакун ҭашкине çапса ўкерет*).

**Тихăн** (*сиксе тăрса*). Ес каплан-ха? Самакунă тăкма вĕрентĕп-ха еп сана, усал хĕрарăм! (*Аллине çĕклет*).

### 9-мĕш курăнни.

**Вирук** (*арҭа йăтса кĕрет*). Ку мĕн? (*Ашшĕне тĕртсе йарса*). Атте, есĕ аташсах кайнă. Ўсĕр! Сирĕн умăрта мĕн?

**Тихăн.** Е!.. хĕрĕм — шуйтан комунисĕ сĕтĕрĕнсе килҭĕ. Сана çакăнта мĕнле усал сĕтĕрсе килҭĕ?

**Тарйе** (*хĕрĕ патне ҭупса пырса*). Вирук, хĕрĕм!

**Вирук.** Аннем, сывă-и? Мĕн ĕçлетĕр есир кунта? Настук, йăмăкăм, сан питў çинҭе мĕн йунĕ? Кам сана? (*Настук йĕрет*). Есир мĕнле пурăннине куратăп ĕнтĕ. Çакăн пек йапала курасшăн килмерĕм те епĕ.

**Тихăн.** Мĕн сана интернатсионалпа хирĕç тухса илмелле-и? Ей, арçынсем, хĕрĕм килнĕ. Хĕрарăмсен камиссарĕ апшĕ çăкăрне çиме килђĕ. Хулара вĕсене нађар çитереççĕ пулмалла, йала килнĕ...

**Вирук.** Атте, халђ есĕ ўсĕр, епĕ çавăнпа санпа калаçас теместĕп.

**Тихăн.** Калаçассу килмест-и? Ăçта ĕнтĕ епир „сирĕн камиссарсен плахоротине" çитме? Епĕ кунта хам хуçа, ман çавăнпа санпа калаçассăм та килмест.

**Вирук.** Санах тăрантарма хушмăп-ха. Пайан есĕ ўсĕр, епĕ çавăнпа санпа калаçмастăп. Мĕншĕн есĕ аннепе Настука хĕнерĕн?

**Тихăн.** Есĕ мĕн? Аçуна тўрĕлесшĕн-и? Хĕненине ху куртăн-а? (*ђăмăрне кăтартса*). Кăна ас тивмен-и-ха?

**Вирук.** Асту, ђипер! Епĕ хăравçăскер мар. (*Ăна тĕртсе йарат*).

**Хĕветĕр.** Ак хĕр!

**Пăнђук.** Ак сĕткенлĕ хĕр! Пултарат! Ак хула хĕрĕсем!

**Вирук.** Акă мĕн, есир хăр путылкăрсене тытса пахђаналла кайăр-ха! Атте, тух! тух! тух! Ман çине куçна-пуçна ђарса пăхса ан

лар. Аллуна йар—çапаймăн, хăрамастăп. Йе, хăвăртрах тухăр! Кайран çывăрса тăрансан калаçăпăр.

**Тихăн**. Есĕ йепле капла хăйса хăтланатăн?

**Вирук** (*ăна хулĕсентђен тытса*). Ан çилен, ан çилен, кайран калаçăпăр. Пахђаналла уттарăр-ха. Арçынсем, тăрăр. Килĕрсене кайсан тата аван пулĕђђĕ, арăмăрсем кĕтесçĕ пуђ. Атте, кай! кай! (*Тĕртсе кăларатђ, ун хыççăн хăй те тухатђ*).

**Пăнђук** (*алăк патне пырса*). Аван хĕр!

**Хĕветĕр**. Аџа. Ку ман Марйерен те лайăхрах тыткалаџ.

**Пăнђук**. Йепле вăл ашшĕне кăларса йађĕ. (*Кайаççĕ*).

**Тарйе**. Ак тамаша, Вирук килни тĕлĕкре анђах курăнмасџ-ши?

**Вирук** (*çыхăпа йапала йăтса кĕрет*). Кайрĕç-и? Кайрĕç пулсан, йураџ ĕнтĕ.

**Наçтук**. Вирук акка, мана атте хĕнесе вĕлерес патнех çитерђĕ.

**Вирук**. Ђимĕр-ха, пĕрерĕн-пĕрерĕн калаçар-ха.

**Тарйе**. Сывă çÿрерĕн-и? Пĕр çулталăк пур ĕнтĕ, санран пĕр хыпар та илмен.

**Вирук.** Пит айакра пурӑнтӑм. Хаљ сирӗн пата канма тесе, ӗҫе вӑхӑтлӑха пӑрахса килтӗм. Анђах кунта канасси пулмасҭ пуљ. Есир хаљ те ӗлӗкхи пекех пурӑнатӑр. Ех тур, тур... Йе, йепле, пулсан та, пурӑнаҫа тӳрлетӗпӗр тӳрлетӗпӗрех.

**Тарйе.** Есӗ хаљ те ӗлӗкхи пекех ђарусӑр пулас. Кађђа кайман-и-ха?

**Вирук.** Кайман та, кайассӑм та килмест. Кайас тесен, вӑхӑт пулӗ-ха.

**Тарйе.** Тен, кампа та пулин халӗ те кађђа каймасӑрах пурӑнатӑн пулӗ?

**Вирук.** Ун ҫинђен шухӑшлама вӑхӑт та пулман. Анне, сӑмавар ларт-ха, ӗҫе-ӗҫе калаҫӑпӑр. Наҫтук, есӗ йапаласене майлама пулӑш-ха.

**Тарйе.** Аҫу мӗн шухӑшлаҭ-ши?

**Вирук.** Унпа та ӗҫе пӗтерӗпӗр-ха. Ахалех унӑнне ҫисе пурӑнас ҫук, укҫа тӳлӗп.

**Тарйе.** Мӗн есӗ, ухмаха йернӗ-и? Аҫуна мӗн укҫи тӳлемелле.

**Вирук.** Ухмаха йерессе йерместӗп те, ҫапах та пӗлетӗп. Йе, сӑмаварна хӑвӑртрах ларт-ха. (*Тарйе кайаҭ*). Наҫтук, йапаласене салт... Мӗн, атте пит хытӑ хӗнерӗ-и?

**Naçтук.** Вăл пĕр майах çапла аташаĭ-çке.

**Вирук.** Пит ĕçет-и?

**Naçтук.** Ех, арçынсем самакункка ĕçеççĕ-çке... Пирĕн те самакункка хăвалакаларĕç те, хаљ хуранĕсене туртса илнĕ.

**Вирук.** Ай-йуй... Çумкка хулара-и?

**Naçтук.** Килтех. Хулана кайĕђђĕ те-ха, увта вăл ĕç тупаймарĕ. Хаљ вăл аттене пулăшкалаĭ. Кăçал ăна авлантарасшăн.

**Вирук.** Кама илесшĕн?

**Naçтук.** Кăтаруç Краçукне илесшĕн?

**Вирук.** Астăватăп вăл хĕре, пиг əван хĕр пулмалла.

**Naçтук.** Çумкка хаљ унпа пит туслă.

**Вирук.** Çумккин пăртак тăнĕ пулсан та пырĕђђĕ те,—çамрăк. Есĕ тата вĕренетĕн-и?

**Naçтук.** Иртнĕ хĕл çӳрекелерĕм те, кăçал шкулĕнђе те вĕрентмелле пек калаçмаççĕ. Йалсем укçа парасшăн мар теççĕ.

**Вирук.** Ђăнах-и? Ех, йали çак? Самакункă ĕçме укçисем пур, шкула пулăшма çук. Еп сан ваљђи пайтах кĕнеке илсе килтĕм. Ак йапаласене майлаштарсан, парăп-ха.

## 10-мӗш куранни.

**Тарйе.** Ак ман савнӑ аҫам.

**Марйе** Сывӑ ҫӳретӗн-и, Верӑ Тихӑнӑвна?

**Вирук.** Ак тата Тихӑнӑвна тейе пуҫларӗҫ. (*Ал тытса*). Сывӑ-ха, Марйе инке.

**Марйе.** Сывӑ ҫӳрерӗн-и? Вӑраха килтӗн-и?

**Вирук** Мӗн ҫухлӗ пурӑнасса пӗлеймес-тӗп-ха. Лерен ҫӗнмесен, пӗр уйӑх пурӑнас-шӑн та. Есир кунта мӗнле пурӑнатӑр?

**Марйе.** Ех, Вирук, епир пит тӗттӗм пу-рӑнӑҫпа пурӑнатпӑр. Пиртен, хӗрарӑмсенҫен ҫутӑ пурӑнӑҫне те кӗтме ҫук та. Арҫынсем малтанах пӑртак ӗҫлекелерӗҫ те, кайран ывӑнҫӗҫ пулмалла. Халӗ вӗсем, кунсеренех кайалла ҫакса пурӑнаҫҫӗ... Ӗҫеҫҫӗ... Ерех сутакан хупахсем те ҫук та, анҫах хупах ҫунехинҫен те ытларах ӗҫеҫҫӗ пуҫ. Хӑп-хӑш ҫамрӑксем ваттисене йатлакаласа та пӑхрӗҫ те, анҫах ун пеккисем пит сахал пулҫӗҫ, нумайӗшӗ ваттисенех хунӑ—сыпка-лама йуратаҫҫӗ. Епир хӗрарӑмсем авалхи пекех пурне те тӳссе пурӑнатпӑр.

**Вирук.** Йепле пулсан та, ытлах хӑрар мар-ха. Ак еп кунта пӑртак ӗҫлекелем-ха, вара мӗн пулӗ.

**Марйе.** Мӗн тӑвас тетӗн вара есӗ? Ҫӗлеме пӗлетӗн-и? Ҫынсене ҫӗлес тетне?

**Вирук.** Ҫук... Епӗ кунта сире, хӗрарӑмсене вӗрентес тетӗп. Аҫасен ҫурҫӗ, вулама ҫӳремелли ҫуртсем уҫмалла, тен комунӑ пекки те тукалайӑпӑр-и?

**Марйе.** Есӗ ҫав ӗҫсене цӗҫҫенех тӑвас тетӗн-и?

**Вирук.** Мӗншӗн пӗҫҫен? Есир те пулӑшкалӑр-ха.

**Марйе.** Мӗн калаҫатӑр. Епир йепле сана пулашайӑпӑр? Есӗ пирӗн комиттетсенҫе тӑракансемпе ӗҫле.

**Вирук.** Комиттетсен ӗҫӗ хӑйне. Епир хамӑр ӗҫлӗпӗр. Мӗн пуҫна суллан? Хӗрарӑмсем, нимӗнтен хӑрамасӑр, хӑйсен ӗҫне тума тытӑнни вӑл хаклӑ ӗҫ. Есӗ хӗрарӑмсем нимӗнех те тӑваймаҫҫӗ тетӗн пулмалла. Ак епӗ сире пайтах йапаласем ҫинҫен калакала ӑнлантарӑп-ха. Пур хӗрарӑмсене те пухасҫӗ.

**Марйе.** Пухӑва пухӑннӑ пек пухӑнмалла-и? Капла пиртен арҫынсем кулса вилӗҫ.

**Вирук.** Кулҫҫӑр. Кулсан, кулсан хӑйсемех ҫарӑнӗҫ.

**Тарйе.** Ай тур, тур, сăмавар çинҫен манса та кайрăм.

**Марйе.** Есĕ çул килсе ывăнтăн пуљ, кан, епĕ сана калаçтарса ҫăрмантаратăп.

**Вирук.** Канăп-çке. Марйе инке, есĕ хĕрарăмсемпе калаçкаласа пăх-ха. Вĕсем ыран совет умне пухăнсан, хĕрарăм пухăвĕ уçăттăмăр. Унта вара мĕн ĕçлемеллине пĕлĕпĕр.

**Марйе.** Пире арçынсем хăваласа йарĕç.

**Вирук.** Никам та хăваласа йама пултараймасť. Епĕр, хĕрарăмсем, арçынсем пекех пухăнма пултаратпăр. Епĕ хам пуху пухасси çинҫен савитре те калаçасшăн. Тен вĕсем хĕрарăмсене пухма пулăшĕç.

**Марйе.** Ну, Вирук! Мĕн тăвасшăн есĕ! Епĕ кайам-ха, есĕ кан. Ыран хĕрарăмсем хăш вăхăта пухăнмалла-ха?

**Вирук.** Кăнтăрла тĕлне.

## 11-мĕш курăнни.

**Марйе.** Апла йурĕ-ха. Сыв пулăр. *(Кайаť).*

**Вирук.** Наçтук, ес кĕнекесем тупрăнта-и? Кай-ха. Çумккана ҫĕнсе кĕр, епĕ ăна курманçке. Есĕ мĕнле кĕнеке вулама тытăнтăн? *(Кĕнекине исе пăхаť).* Ха-ха-ха! „Женщина и

социализм“ Бебеля. Ђим-ха, ку кĕнекене есĕ халех ăнланаймăн. Кунта сана ăнланмаллисем урăх кĕнекесем те пур.

**Настук.** Темĕнле сăмахсем кунта.

**Вирук.** Вĕсене те ўлĕм ăнланăн-ха, халђ Çумккана ђĕнсе кĕр-ха. *(Наçтук кайат̆, Вирук шкап уçса).* Кĕнекесене те çакăнта хурас. *(Шкапĕнтђен тĕрлĕ йапаласем шăлса кăларат̆. Кĕлентђе тĕл пулса).* Ку мĕн? Им-и? *(Вуласа пăхса).* Семен Пуххăва сĕрмелли. Йурат̆-ха латынла вулама пĕлетĕп, мĕнле имне вуласа кăтартам ĕнтĕ: Гидраргиум—ђĕркĕмĕлђ, ђĕркĕмĕлпе çĕрмелли. Ку мĕнтен-ши? ђимха словар çине пăхас. *(Кĕнеке илсе пăхат̆).* Гидраргиумпа емеллеççĕ.. *(хуллен вулат̆, унтан кĕнекине хурса).* Çумкка усал ђир йертнĕ пулмалла, хăй авланасшăн тата. Вăл усал ђир çинђен нимĕнех те пĕлместшим? *(Кĕлентђе çумĕнтђи хутђĕ çине пăхса).* Ку емеле илни 3 уйăх пур, имçамĕ кăшт анђах ђакнă. Вăл ђĕрĕлсе çитмесĕрех емелленме пăрахнă пулмалла. . Ех ухмах... ухмах... Мĕн тăвас-ши? Аннене каласан та, ăна хуйхăртни анђах пулĕ, аттене каласан, хĕнесе пăрахĕ. Тата Çумкки, ухмахскер, Краçукпа çўрет. Авланса йарсан, ђирлĕ ађасем çуратма

тытӑнӗҫ. Ҫумкка хам тӑванӑм пулсан та, Краҫука вӑл ҫирли ҫинҫен систерес пуҫ. Ҫӑн ӗнтӗ, Краҫукӗ те Ҫумккана йуратаҡ пуҫ те, ҫапах та кун ҫинҫен ӑна систересех пулаҡ.

## 12-мӗш курӑнни.

**Тарйе.** Хӗрӗм, еп сӑмавара пахҫана илсе тухрӑм, аҡа ҫей ӗҫме. (*Ҫей ҭашкисем илсе тухаҭ*).

**Вирук.** Йурӗ анне.

## 13-мӗш курӑнни

**Ҫумкка.** Вирук, сывӑ-и? Мана Наҫтук Вирук килнӗ тесе кӑшкӑраҡ те, епӗ шанмасӑр тӑратӑп. Аҡа ҫуп тӑвар пуҫ, курманни нумай пулаҡ. (*Ыталасшӑн*).

**Вирук** (*алӑ парса*). Те ҫул ҫинҫе шӑнкаланипе, ман тутасем пӑсӑлнӑ, ан ҫуп ту-ха. Мӗнле пурӑнатӑн? Ма хуларах йулмарӑн?

**Ҫумкка.** Ахалех. Ӗҫ те тупаймарӑм, халӗ аттене пулӑшкаласа пурӑнатӑп.

**Вирук.** Вӑл йураҡ те-ха. Есӗ авланасшӑн темеҫҫӗ-и?

**Ҫумкка.** Атте авлантарасшӑн-ҫке, хам авланасшӑнах та мар та.

**Вирук.** Красукпа сӳрет темессĕ-и? Йурататăн-и мĕн?

**Сумкка.** Сана мĕншĕн?

**Вирук.** Еп санран тăван акку пек ыйтатăп, кала-ха,—Красук сан кăмăлна кайаҭ-им?

**Сумкка.** Хĕрĕ пăсăклă мар, аван хĕр.

**Вирук.** Есĕ ху ун кăмăлне килетĕн-и?

**Сумкка.** Епĕ мĕнтен кайа? Хĕрĕ йăпшăнаҭ-ха ман сумалла. Ытла хăйуллах мар та, выљакалама тытăнсан, тӳрех куссуљ тăкма тытăнаҭ.

**Вирук.** Есĕ мисере-ха?

**Сумкка.** Сирĕм пĕр иртрĕ ĕнтĕ. Авланма вăхăт.

**Вирук.** Ир мар-и? Васкамастăн-и?

**Сумкка.** Сирĕншĕн хула сынинсемшĕн ир те, пире ир мар.

**Вирук.** Ак ес мана мĕн каласа пар-ха: авлансан арăмупа мĕнле пурăнассине есĕ пĕлетĕн-и?

**Сумкка.** Мĕн пĕлмелли пур унта. Налуй тавра виссĕ саврăн та, вăйсă тытса йар,—ĕс пулђĕ те.

**Вирук.** Еп ун синђен мар. Тӳрех ыйтамха: есĕ сывă-и?

**Çумкка.** Ман мĕн арăмпа кĕрешмелле мар пуђ?

**Вирук.** Кулкаланипе ĕç тухмĕ. Епĕ есĕ усал ђирпе ђирленине пит аван пĕлетĕп. Вăл ђир пит сикет, есĕ çавах авланасщăн.

**Çумкка** (*вăтанса ура çине тăрат*). Мĕн есĕ тухтăр мар пуђ, ăçтан пĕлен?

**Вирук.** Пĕлмесĕрех каламастăп çав. Çавăнпа та епĕ сана, ырă çынна калană пекех, ђĕрĕлсе çитмесĕр ан авлан тетĕп. Хĕре сайа ан йар. Есĕ ху та вăл сана йуратаť терĕн. Тепĕр çын пурăнăçне мĕн тума çĕмĕрмелле-ха?

**Çумкка.** Ак ес мĕнле калаçа пуçларăн? Есĕ ху хулара комиссарсемпе сĕтĕрĕнсе çўресе ђирлерĕн пуђ те ха, хађ çынсене вĕрентесшĕн. Хăнтан ытман ђух, ђĕлхўне тăсса ан тăр.

**Вирук.** Çумкка, ан кăшкăр. Мана хăратаймăн. Есĕ ху ђирўнтен пуçĕпех ђĕрĕлсе, тухтăртан ман алла хут илсе килсе памасăр, епĕ сана авлантармастăп. Краçука есĕ ђирлине пĕтĕмпех калатăп. Ытти хĕрсене те, санран сыхланса çўретђĕр тесе, пурне те каласа парăп·

**Çумкка.** Тăван пулђĕ-и ку? Тăван шăллин йатне йал çине йарасшăн. Аттене каласан, агте сана ђикелентерсе кăларса йараť те-ха.

**Вирук.** Никама та ес калас çук. Еп хам сăмахăма калла тумастăп. Хĕр ĕмĕрне çĕмĕрсе, ҫирлĕ аҫасем ĕрҫетме памастăп.

**Çумкка** *(сиксе тăрса)*. Ҫим-ха, лекĕн-ха ман алла. Тăван мар ес каплапа! Краçука йурийех пăсатăп, сире те пурне те ҫир йертеп.

**Вирук.** Мĕнле хăратма тытăннă? Кама? Мĕншĕн? Ку ĕçре санран пуçне кам айăплă.

**Çумкка** *(хăраса)*. Вирук, итле-ха. Тархасшăн никама та ан кала.

**Вирук** *(çемçен)*. Манран пуçне никам та пĕлмĕ. Есĕ емелленмеллех. Ыранах пуҫнитсана кайса, тухтăр хушнине тăватăп тесе сăмах пар. Пуçĕпех ҫĕрĕлсен... епĕ пурĕ пĕрех есĕ ҫĕрĕлни çинҫен тухтăртан ыйтса пĕлеп.

## 14-мĕш курăнни.

**Тарйе** *(кĕрсе)*. Вирук, аťа ҫей ĕçме.

**Вирук.** Çумккапа пăртак калаçкаларăм-çке.

**Тарйе.** Сăмавара те кунта йăтса кĕрес? Темĕскер тулта çумăр та пуçтарăнаť. Çумкка, ырана вутă таткала-ха. *(Çумкка кайаť)*. Аҫам, есĕ килтен 16-ра хапрăка ĕçлеме тухса кайрăн, унтан пĕлтĕр килсе кайнăҫҫĕ. Вĕренкелерĕм тетĕн. Хаљ мĕнле пурăнатăн, — каласа пар-ха.

**Вирук.** Вĕренетĕп те, ĕçлетĕп те: станок патĕнҫен кĕнеке патне ҫупап, кĕнеке патĕнҫен станок патне пырап. Кĕнекинҫен пуçне станокĕпе анҫах та вăхăт пайтах иртет.

**Тарйе.** Мĕнле майпа киле килме шухăш тытрăн-ха?

**Вирук.** Ҫирленĕ хыççăн мана пăртак канма вăхăт паҫĕç те, çавăнпа килтĕм.

**Тарйе.** Ех, Вирук, пирĕн пурăнăç çăмăлах мар. Тăпсакайĕнҫе пурăннă пекех, пĕр çутă та курмастпăр. Арçынсем хĕнеççĕ... Хĕрарăмсем ĕçлесех халтан кайаççĕ.

**Вирук.** Анне, малашне пурăнăçа тӳрлетĕпĕр. Хаҫ ҫей ĕçесҫĕ.

15-мĕш курăнни.

**Вирук.** Наçтук есĕ ăçта кайнăҫҫĕ?

**Наçтук.** Марйе инке йĕркипе сан çинҫен каласа çӳресе хĕрарăмсене пухăва тухма хушат.

**Вирук.** Çӳретĕр-ха.

**Наçтук.** Вирук аппа, есĕ мана кĕнеке парасшăнҫҫĕ те.

**Вирук.** Вулама пĕлетĕн-и?

**Наҫтук.** Епӗ сана вулаҫа кӑтартам-ха. Мӗнле кӗнеке парсан та, вӗтӗпе ҫырнине те вулатӑп.

**Вирук.** Ак ҫакӑнтан вуласа пар-ха. (*Кӗнеке парат*).

**Наҫтук.** Малашне ӗҫлекенсемпе хӗрарӑмсене ҫӑмӑллӑх пулмалла, тенӗ Бебель.

**Тарйе** (*савӑнса*). Вирук ӱунӑм, мӗнле ырӑ ҫутӑ, ырӑ хыпар есӗ кунта илсе килтӗн!

*Ӱаршав.*

---

## ИККӖМӖШ ПАЙӖ.

### Ҫав пӳртрех. Тихӑнпа Тарйе.

### 1-мӗш куранни.

**Тихӑн** (*мӑкӑртатса кӗрет*). Ех, ку ђунехи ађа-пӑђа: тӑван аппӗне сума сумаҫҫӗ. Хӗр ӳстертӗм. Ҫав хӗрех аппӗне хирӗҫ тавлашаѓ. Пӗри апла мар, тепӗри апла мар. Мӗн йапала ӗнтӗ ку? Ара епӗ унӑн аппӗ-и, аппӗ мар-и?

**Тарйе**. Вӑл ӑслӑ сӑмах каласаѓ-ҫке.

**Тихӑн**. Пӑтратакан хӗрарӑм вал: йалти хӗрарӑмсене пӑтратса пӗтерђӗ. Ӗҫсӗрскер шухӑшласа кӑларнӑ, нисӑта ҫук йапала. Тупӑннӑ комиссар арӑмӗ!.. Ӗҫме йурамасѓ... Мӗн епӗ ун укҫипе ӗҫетӗп-и? Ӗҫсен те хамӑнне ӗҫеп,—хамӑн ирӗк! Хамӑнне хам ҫунтарма та пултарап.

**Тарйе**. Вӑл сана сӗлӗ илме укҫа пађӗ-ҫке. Ес ӑна ӑҫта ђикрӗн? Ӗҫсе пӗтертӗн-и?

**Тихӑн**. Ӗҫнӗ пулсан, мӗн тӑвас тен! Вирук ман хӗр, ҫавӑнпа ун мана пулӑшмалла. Епӗ ӑна 15 ҫул тӑрантарнӑ.

**Тарйе**. Есӗ ӑна 15 ҫулхи хӗре хулана ӑсатрӑн та, вӑл хулара сахал ӗҫленӗ пуљ

тетĕн-и? Çын панђе те пуранна, хапракра та ĕçленĕ. Уйахсерен укçа йаркалаттђĕ, парнесем те сахал илмен.

**Тихан.** Ађисем ашшĕсене пахмалла çав. Есĕ ана самаххусемпе пасатан. Вал сирĕнне пуринне те пуçарсене патратса пĕтернĕ. Кала-ха ĕнтĕ—мĕне кирлĕ шкул? Унпа вал пурин пуçне те ыраттарна. Темĕн çунмалли пур шкулшан. Ак ĕнтĕ унта пĕренесем турттармалла. „Укçине те шкулах леç, анђах унта тура çинђен ан вĕрентĕр“. Ђим, иртĕнеймĕн! Ес хут мĕн тусан та, турра ан тив. Вал санран асла!

## 2-мĕш куранни.

(*Марйе кĕрет*).

**Марйе.** Вера Тиханавна килте-и?

**Тихан.** Сире хĕрарамсене вал мĕн тума кирлĕ-ха?

**Марйе.** Ман ывалам ђирлерĕ-çке. Вал мĕнле те пулин пулашаймĕ-ши тетĕп те. Пулђнитсине кайма та инçе, кайсан та тухтарне те тĕл пулапар, те çук.

**Тихан.** Вирук хĕвершал мар пулђ.

**Марйе.** Хӗвершӑлӗ хӗвершӑл мар та-ха вӑл, анҫах ун ҫирсем ҫинҫен каланӑ кӗнеки пур тет. Вирук вӑл йаланах пулӑшатҫӗ.

**Тихӑн.** Пӑтратса пӗтернӗ ӗнтӗ вӑл сирӗн пуҫӑрсене. Аташса ҫӳретӗр ӗнтӗ есир унпа.

**Марйе.** Вирук сире, самаконккӑ хырӑмӗсене, питех кӑмӑла каймасҭ-и? Сирӗн кирлӗ мар ӗҫӗрсене хӑраса пытарсах тӑмасҭ ҫав. Пурне те калаҭ. Хӗре хурламалла мар. Епӗ ӑна хам та паминани кӗнекине ҫырма хушрӑм. Турра ӗненмест пулсан та.

**Тарйе.** Вирук претҫетаттӗл патне йаҫлӗ уҫас тӗлӗшпе кайрӗ пулмалла.

**Марйе.** Ей йаҫлине уҫсанҫҫӗ. Вара пирӗн алӑмӑрсем ирӗке тухӗҫҫӗҫ. Аҫасене пула мӗн ҫухлӗ тӑвас ӗҫе хӑваран. Пуринҫен ытла тырӑсене пуҫтарнӑ вӑхӑтра кӑнеӗр.

### 3-мӗш курӑнни.

(*Вирук кӗрет*).

**Вирук** (*кӗрет*). Е, Марйе инке килнӗ.

**Марйе.** Сана кӗткелесе ларattӑмҫӗ-ха. Манӑн Ваҫукӑм темӗн ҫирлерӗ-ҫке. Тем пек кӑшкӑраҭ. Пырса пӑхаймӑн-ши?

**Вирук.** Йурӗ, пырса пӑхӑп.

**Тарие.** Ех, Вирук, есĕ те çав пĕр вĕçĕмсĕр ĕçлесе çӳрен. Пăртак килте канса ларсан та йуратĕҫĕ. Халĕ епĕ сана аванрах пăхса калаçайман та.

**Вирук.** Йурĕ-çке, анне. Атте, пайан каç пухăва тухма ан ман, унта йаçли уçасси çинҫен ĕç татмалла. Утă çийĕ те çывăхарат, ун хыççăн ыраш вырма та ҫасах тухĕç. Аҫасене никамсăрах тăкса хăварас марҫҫĕ.

**Тихăн.** Пит кирлĕ сан ĕçӳсем. Шухăшласа кăларнă çынсене пăтратма тĕрлĕ ĕçсем: йаçли, шкул... урăх тата сире мĕн те пулин кирлĕ мар-и? Театтăрсем туса памалла мар-и?

**Вирук.** Театтăр тăвасса тăваймăпăр та-ха, халăх çурҫе уçасҫĕ. Марие инке, пире хуларан пулăшма пулҫĕç. Епĕ хамăр хапрăкри йулташсене çырнăҫĕ те, вĕсем пирĕн йала пулăшса тăма пулҫĕç—вĕсем пире шефе илеççĕ.

**Марие.** Ку мĕн тата. Епĕ сана ăнланаймастăп.

**Вирук.** Пире вĕсем укçа, тĕрлĕ йапаласем кĕнекесем йарса пулăшса тăрĕç. Еп ун çинҫен пайан пухура каласа кăтартăп-ха. Анне, Çумкка ăçта-ши, ман унпа калаçмаллисем пурҫĕ.

**Тарйе.** Лаша шыва кӳртме кайсаҫҫӗ, килет те пуҫ ӗнтӗ.

**Верук.** Аҭа, Марйе инке, унҫҫен сирӗн пата кайса килер. Ҫумкка килсен, мана кӗттӗрҫҫӗ.

**Марйе.** Аҭа, Верӑ Тихӑнӑвна. (*Кайаҫҫӗ*).

**Тарйе.** Хам хӗрӗм ҫакӑн пек пулӗ тесе еп шухӑшламан та.

**Тихӑн.** Пит ӑслӑ. Ун хӳрине пӑртак кӗскетмелле. Хаҫ те йалӗпе арҫынсем сан хӗрӳ кӑмиссар пулнӑ, апшӗне те вӗрентет тесе кулаҫҫӗ.

**Тарйе.** Вӑл тивӗҫле тӑрӑшаҭ-ҫке. Сире хӑвӑра—арҫынсене те вӑл тӑрӑшни усӑллӑ.

**Тихӑн.** Пирӗн кӑсйасенҫен ытларах кӑларма тӑрӑшаҭ-и?

### 4-мӗш курӑнни.

**Кӑҭаруҫ** (*кӗрет*). Те вӑхӑтлӑ килтӗм. Сывӑ-и?

**Тарйе.** Кӑҭаруҫ инке, килех. Иртсе лар.

**Кӑҭаруҫ.** Паҫӑшка арӑмӗ патне кайсаттӑм, хаҫ тата ҫул майӗ кунта та кӗрсе тухас терӗм. Калаҫмаллисем те пур.

**Тихӑн.** Килмесӗр,—килекене епир хавас. Мӗнле хыпарсем пур-ши йалта?

**Кӑҫарус.** Йалти хыпара пӗлместӗп те, епӗ сирӗн Ҫумккӑр ҫинҫен калаҫма килсеттӗм. Хам Краҫукӑмпа калаҫса пӑхрӑм. Ҫамрӑксем килӗштерессӗ пулас, Тарйе кип те пӑссах каймасҫ. Ҫавӑнпа минҫет ҫинҫен паҫӑшкана систерсен те йурамӗ-ши тетӗп. Сана Тарйе кин каланӑ пулҫ.

**Тихӑн.** Пӗлетӗп. Еп вӑл ӗҫе хирӗҫ пымастӑп. Сана хӑна та, хӗрне те пит аван пӗлетӗп. Есӗ пӗҫҫен пулсан та, ҫуртна йӗрне тирпейлӗ тытатӑн. Ҫумккана сан патна йарӑп.

**Кӑҫарус.** Апла пулсан йурӗ еппин.

### 5-мӗш курӑнни.

(*Ҫумкка кӗрет*).

**Кӑҫарус.** Ак хӑй те ҫитрӗ. Хӑй умӗнҫе калаҫар.

**Ҫумкка.** Мӗн ҫинҫен?

**Кӑҫарус.** Мӗн, мӗн ҫинҫен? Есе Краҫук патне ҫӳретӗн-ҫке.

**Тихӑн.** Нимӗн каламалли те ҫук. Пур те пит аван пӗлессӗ. Ҫумкка авланаҫ, епӗ пехиллетӗп.

**Ҫумкка.** Епӗ халех авланаймастӑп-ха.

**Кӑҫарус.** Мӗншӗн есӗ халех авланаймастӑн? Мӗн сан турру ҫук-им? Есӗ пӗркун Краҫукпа

мана мӗн каларӑн? Астӑватӑн-и? Аҫусем те хапӑл тӑваҫҫӗ. Аҫу сана киле кӗме йаратӑп, тет. Тен есӗ тепӗр хӗрпе паллашман-и?

**Ҫумкка.** Нимӗнле хӗре те епӗ ҫулӑхман. Ман авланма ҫул ҫитмен.

**Тихӑн.** Ҫул ҫитмен мар ӗнтӗ. Авланмасӑр ҫӳресен, тата пӑсӑлса кайӑн. Епӗ 18 авланнӑ, есӗ халђ ӗнтӗ 21 тултарнӑ.

**Кӑтаруҫ.** Ак мӗн хӑтланатӑн есӗ. Хӗр хыҫҫӑн ҫӳреме сан шухӑш та, авланас тесен сан шухӑш мар-им? Халђ пытанас шухӑшлатӑн-им? Ку мӗнле йапала? Есӗ хӑтланнине пӗтӗм йал пӗлет ӗнтӗ.

**Ҫумкка.** Еп халех авланмастӑп тесе сӑмах патӑм.

**Кӑтаруҫ.** Ах тур, тур, ку мӗн пулса тӑђӗ?

**Тихӑн.** Ҫумкка, мӗн есӗ манран тӗнђе култӑр тетӗн-и? Пӑрах кутӑнланма. Ак епӗ каҫах, пађӑшка патне кайса, минђет тӑвасси ҫинђен калап.

**Ҫумкка.** Ҫук, епӗ халех авланмастӑп. Мана авланма хушмаҫҫӗ. Мана Вирук авланма хушмасӗ.

**Тихӑн.** Кунта та Вируках пӑснӑ. Хӑҫанђђен вӑл пӑтратса пурӑнасшӑн-ха. *(Вирук кӗрет).*

Килтĕн-им? Ну, мĕнле пек кăмиссар арăмĕ? Есĕ мĕншĕн ҫĕнмен ҫĕре сăмсуна ҫиксе пăтратса ҫӳретĕн, кала-ха?

### 6-мĕш курăнни.

**Вирук.** Мĕн пулнă.

**Кăйаруҫ.** Ҫим-ха, Тихăн ывăлсем, епĕ унпа хам калаҫса пăхам-ха. Ак мĕн, хĕрĕм, халь епир сирĕн Ҫумккăр ҫинҫен калаҫрăмăр. Вăл ман Краҫука тахҫанах пĕлет.

**Вирук.** Апла, килĕшесшĕн пулмалла пуль те, анҫах Ҫумккана халех авланма йурамасть. Вăл авланма пултараймасть.

**Кăйаруҫ.** Мĕншĕн? Мĕн есĕ Ҫумкка? Сан хăвăн калаҫма ҫĕлхӳ ҫук-им?

**Ҫумкка.** Еп ун ҫинҫен калаҫма пултараймастăп. Манпа ан калаҫăр. Вирукран ыйтăр. *(Васкаса тухать)*

### 7-мĕш курăнни,

**Тихăн.** Ку мĕн пулҫĕ тата?

**Вирук.** Кăйаруҫ инке, еп сире сийен тăвастăн мар. Туйне халех тумалла мар. Пĕр ҫур ҫул тăрăр ĕнтĕ.

**Тихăн.** Есĕ ун пек калаҫма пăрах-ха. Санран асли епĕ. Сан ку ĕҫре сăмсаланса

çӳремелле мар. Çумкка, аштӗ хушсан, авланаҭ. Пайанах пађӑшка патне кайса минђет тӑвасси çинђен ӗç тататӑп. Кӑҭаруç инке, есӗ вӗсене ан итле. Килне кай хаљ. Ӗçӗ пуласси пулӗ.

**Кӑҭаруç.** Çапла пулмасӑр. Тихӑн ывӑлсем, мӗн ађа-пӑђасене итлеме!

**Тихӑн.** Килне кай, еп сан патна каçалапа кӗрсе, хӑçан минђет тумаллине калӑп.

**Кӑҭаруç.** Сыв пулӑр еппин. Вирук ман сана пӗр сӑмах калас килет. Есӗ хула çынни пире йал çыннисене ӑнланаймастӑн. Епир хресђенсем. сирӗнсӗр пуçне те аван пурӑнатпӑр. Епӗ сана тата та калӑттӑм та, анђах пулас хурӑнташпа вӑрçас килмест. Сыв пулӑр. *(Кайаҭ).*

## 8-мӗш курӑнни.

*(Кр**а**çуксӑр).*

**Вирук.** Епӗ хаљ ӑна йӳрийех нимӗн те каламарӑм, анђах епӗ, атте, анне, сире калас тетӗп. Çумккана хаљ авлантарма йурамасҭ: вӑл усал ђир йертнӗ. Хаљ вӑл емелленмелле. Ӑна сывалиђђен авлантарсан, вӑл усал ђирне арӑмне те, ађисене те йертеҭ.

**Тихăн.** Пĕтрĕм, пуç... Камран йертнĕ-ши?

**Вирук.** Камран йертнине епĕ пĕлместĕп те, анђах вăл ђирлĕ, ун çинђен вăл мана хăйех каларĕ. Унăн ђĕрĕлесех тесен, пит вăрах емелленмелле. Пĕр ик çул емелленсен авланма пултарĕ.

**Тарйе.** Ах тур, тур, мĕншĕн çак инкек çитрĕ-ши?

**Вирук.** Ăӊа хаљ пуљнитсăна емелленме йамалла.

**Тихăн.** Килте кам ĕçлĕ? Мĕн епĕ сирĕншĕн кўлнĕ лаша-и? Çумкка ĕçлет-ха вăл.

**Вирук.** Вăл килте пурăнсан çимĕçсемпе, савăт-сапасем урлă ђирне йертме пултарать.

**Тихăн.** Кай, апла мар пуљ. Вăл ђирлĕ мăр пуљ. Есĕ ахалех шухăшласа кăларнă пуљ. Епĕ унтан хам ыйтса пăхам-ха.

**Вирук.** Атте, есĕ ăна ыйтса ан асаплантар. Вăл ахаљ те пит хуйхăрать, епĕ те ăна каластаркаласа пăхрăм та. Вăл ђирли çинђен çынсем пĕлсен, вара вăл хăйне хăйех пĕтерет.

**Тихăн.** Мĕн тăвас ĕнтĕ. Йал кулса вилет ĕнтĕ: килĕшме тытăнђĕç те, кутăн кайрĕç тейĕç.

**Вирук.** Кăťаруç инке патне кайар-ха. Унпа калаçса, ăна пусарар. Йепле пулсан та, тухнă вута сӳнтермелле.

**Тарйе.** Ех намăс, намăс. Мĕншĕн ку хуйхă ман пуç çине килҭĕ-ши? *(Йĕрет).*

**Вирук.** Анне, ан йĕр. Сан куççулĕ пулăшас çук. Аťăр, Кăťаруç инке патне кайар. Вăл Краçукне туй пуласси çинҭен калиҭҭен çитер. Атте, есĕ Çумккана калаçтарса ан пăс. Ырри пулас çук. Пурĕпĕр епĕ ҭире сарма памастăп.

**Тихăн.** Пусăм çавăрнаť ĕнтĕ ку инкекпе.

### 9-мĕш курăнни.

**Вирук.** Наçтук, есĕ килте лар-ха, кам та пулсан килсен: ҭасах килеççĕ, те. *(Кайаççĕ).*

### 10-мĕш курăнни.

**Наçтук** *(Пĕтӆҭен).* Ăçта-ши ман кĕнекем? Мĕн те пулин пăхмасăр калама вĕренесҭĕ. Лайăх кĕнекесене вулама йурататăп-çке. Ех, ман тата вĕренесҭĕ!

### 11-мĕш курăнни.

**Çумка** *(кĕрет).* Ăçта ушкăнĕпех карĕç?
**Наçтук.** Халех килеççĕ, пăртак тăр.

**Çумккă** (*хăй ăшăнтçе*). Ех, ăшăм çунаť-çке, хама хам вĕлерĕттĕм.

### 12-мĕш курăнни.

**Красук** (*кĕрет*). Сывă-и? Вирук килте-и?

**Настук.** Вăл килте çук-ха, аттесемпе кайрĕ.

**Çумкка.** Настук, сысна çурине тухса хуп-ха.

### 13-мĕш курăнни.

**Настук.** Йурĕ. (*Тухаť*).

**Çумкка.** Красук, ман кунтан каймалла.

**Красук.** Ăста?

**Çумкка.** Хулана ĕçлеме, унта хаљ платниксем кирлĕ, тет.

**Красук** (*йĕрсе*). Çумкка, ан кай. Ху мĕн каланине астăватăн-и? Епĕ мĕнле йулăп? Анне аçупа калаçса пăхнă. Вăл та авлантарасшăн тет сана.

**Çумкка.** Еп хаљ сана илме пултараймастăп.

**Красук.** Урăххине йурататăн-и мĕн?

**Сумкка.** Красук, љăнахах урăх никама та йуратмастăп.

**Красук.** Мĕн пулнă тата?

**Çумкка.** Ан ыйт тархасшăн. Мана хама та çăмăлах мар. (*Сĕтел çине пуçне тайса*).

**Краçук.** Мĕн пулнă сана тата? Кала тархасшăн, мĕншĕн есĕ мана мăшкăллассшăн? Епĕ санран пуçне никама та йуратмастăп. Кам пире ђарса тăраṫ?
(*Ăна ыталаṫ*).

**Çумкка.** Ан тыт. Мана ан перĕн. Вирук хушмарĕ.

**Краçук.** Вирукăн мĕн ĕç пур? Вăл сана тен хулана илсе кайасшăн пулĕ? Унта вăл сан валли урăх хĕр тупнă пуђ?

**Çумка.** Çук, нпмĕнле хĕр те тупман.

## 14-мĕш курăнни.

**Вирук** (*кĕрет*). Краçук та кунта. Сывă-и? Епир сирĕн патăра кайрăмăр та. Сан аннŭ таçта кайнă, ман кĕтессĕм килмерĕ, атте унтах йулђĕ.

**Краçук.** Вирук, ес мĕншĕн ман телейе çĕмĕрессшĕн? Çумккана хулана илсе кайса, унта ун валли хула хĕрĕ тупасшăн-и мĕн?

**Верук.** Мĕн калаçан ес, Креçук? Мĕн хула хĕрĕ?

**Краçук.** Есĕ çынсене пăлхатнине епĕ 'пит аван пĕлетĕп. Çумккана та пăснă, хаљ ĕнтĕ вăл мана пăрахасшăн.

**Вирук.** Ҫим-ха, ан ула-ха. Епӗ сана каласа парам-ха. Ҫумкка, есӗ кунтан тух-ха. *(Ҫумкка тухать)*. Краҫук, итле-ха. Епӗ санран ытларах пурӑннӑ. Епӗ Ҫумккана халех авланма йурамасть тетӗп, ҫӑнахах та йурамасть. Манма пултарсан, есӗ Ҫумккана пуҫӗпех ман. Питех йурататӑн пулсан, пӗр-ик ҫул кӗт. Ун ҫух вӑл сана илӗ, анҫах хаљ ӑна авланма йурамасть.

**Краҫук.** Мӗншӗн тата? Кам ҫарать? Аҫусем те хирӗҫ мар.

**Вирук.** Есӗ ухмах хӗр мар, кала-ха, есӗ мӗнле те пулин сикекен ҫирпе ҫирлесен, ҫав ҫире, Ҫумккана йертессе пӗлсе, ӑна каҫҫа кайӑн-и? Ху ҫирне хӑвӑр савнӑ ҫыннуна йертесшӗн пулӑн-и?

**Краҫук.** Апла тӑваҫҫен, епӗ луҫҫӗ вилем.

**Вирук.** Ҫук, вилмелле мар, емелленмелле.

**Краҫук** *(йӗрет)*. Ех турӑ, мӗншӗн ку капла пулҫӗ?

**Вирук.** Хӗрхенетӗп епӗ сана, Краҫук, ҫӑнахах хӗрхенетӗп. Ҫитменнине тата есӗ ху тӗллӗн пурӑнма пултараймастӑн, ҫавӑнпа та епӗ сана ытларах хӗрхенегӗп. Йе, ан йӗр,

куççулĕсем пулăшаймĕç. Санăн хаљ пурăнăçне мĕнле тăвасси çинҕен шухăшламалла. Иртни иртĕ, йепле пулсан та сан Çумккана манмаллах.

Краçук. Ех, Вирук, пĕртге хĕрхене пĕлместĕн.

**Вирук.** Çук, еп сире иксĕре те пит хĕрхенетĕп. Çумкка та мана йут мар-çке. Итлеха, пĕр есĕ анҕах мар, темиçе пин хĕр тейсĕр. Ан йĕр, лăплан, ме-ха, пăртак сивĕ шыв сып. Сана тўсме йăвăрне епĕ пĕлетĕп. Хуйхăна манас тесен, есĕ ак мĕн ту: епĕ пит пысăк ĕç тума шухăшланă, ес мана çав ĕçре пулăшăн, епĕ сана вĕрентĕп.

Краçук. Епĕ ăçтан сана пулăшам? Епĕ мĕн пĕлетĕп? Çыруне те пăртак анҕах пĕлетĕп.

**Вирук.** Ĕçлес тесен, вĕренĕн.

Краçук. Хал нимĕн те калаймастăп. Пуçăм ыратаť.

**Вирук.** Итле-ха мана, Краçук. Хаљ епĕ сирĕн туйăра пăсман пулсан, есĕ Çумкка арăмĕ пулнă пулăттăн. Вара сирĕн аҕăрсем суккăр, йухан-суранлă, çийен сăмсаллă пулнă пулĕҕҕĕç. Есĕ ун ҕухне кама ылханăттăн?.. Сумккана та, хăна та, пире те,

**Красук.** Вирук, есӗ ҫӑнне калатӑн.

**Вирук.** Ҫӑн пулмасӑр.

**Красук.** Ес кама та пулин йуратнӑ-и?

**Вирук.** Епӗ-и? *(Пӑртак тӑрсан).* Йуратнӑ, тен сап ҫухлӗ анҫах та мар, санран та вӑйлӑрах йуратнӑ пулҍ еп, анҫах вӑл йурату ирӗлсех пӗтрӗ. Халӗ ӗнтӗ епӗ пур ҫухӑнсене те хӗрхенсе ҫавсене пулӑшашшӑн тӑрӑшатӑп. Епӗ кунта нумайах та пурӑнаймӑп,— тумаллисем пайтах пулӗҫ. Есӗ вулама та, ҫырма та пӗлетӗн ак ме-ха, ҫак кӗнекене вуласа пӑх. Ҫак кӗнекене вуласан, есӗ мана пулӑшма пӗлӗн.

**Красук.** Темӗн, епӗ сана пулӑшаймӑп.

**Вирук.** Еҫ вӑл хӑйех вӗрентет. Ӗҫрен хӑрамалла мар. Ӑна пӗҫӗкҫӗн ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ. Сан пӗҫӗкҫӗ ӗҫне кура, сана пысӑккинҫе те ҫынсем шанса пулӑша пуҫлӗҫ.

### 15-мӗш курӑнни.

*(Ҭыхӑнпа Тарйе кӗреҫҫӗ).*

**Вирук.** Ак аттепе анне те килеҫҫӗ. Мӗн, калаҫайрӑр-и?

**Тихӑн.** Ех пӑтратса пӗтертӗн, хӗрӗм. Сан килнинҫен килменни аванҫе. Намӑса йатӑн.

**Тарйе.** Кăтаруç инке пире вăрçрĕ-çке. Çумккана та ылханса пĕтерҫĕ.

**Тихăн.** Пĕтместĕр те-çке есир. Ак кайатăп та ĕçетĕп.

**Вирук.** Ĕçмесĕр, тата мĕн тумалла. Атте, асту. Еп сана тўсĕп тўсĕп те, анҫах хăратма та май тупăп. Сĕлĕ илме панă укçана ăçта ҫикрĕн? Лашу урисене аран сĕтĕркелесе çўрет, çапах та есĕ сĕлĕ илес укçана ĕçсе йаран. Лашу ўксен кам айăплă пулĕ? Сухаллусем кăвакарнă, ăсу хаљ те кĕмен. Ак хулана кайса кил-ха, ман унта хут йамалла.

**Тихăн.** Кама?

**Вирук.** Кăйатăн-и? Кайан пулсан йурĕ. Еп сана ăçта ҫарăнмаллине калăп. Есĕ унта çĕр каçăн. Хапрăкра мĕнле ĕçленине курас тесен, сана унта илсе кăйса кăтартĕç,—уçăлкала пăртак.

**Тихăн.** Çыруне пар ҫасрах. Тарса кайăттăм çакăнтан! Куçăм ан куртăрҫĕ нимĕн те! Тухса лаша кўлес пул.

### 16-мĕш курăнни.

**Тарйе.** Кама пăхса ўсрĕн-ши, Вирук хĕрĕм, есĕ. Сăмахна та калама пĕлен, пурне те калама пĕлен, пурне те итлеттерен.

**Вирук.** Хуйхăпа асап пурне те вĕрентрĕç. Краçук, килне кай ĕнтĕ, аннŷнтен ан хăраçисе йамĕ. Сана кам та пулсан мăшкăллас пулсан, тŷрех ман патма кил. Епĕ сана мăшкăллатармăп.

**Краçук.** Есĕ мана ĕç çинђен каласаттăн, ăна мĕнле тумалла?

**Вирук.** Епир ăна пĕђĕкçĕ ĕçрен пуçлăпăр. Ав, Тĕмеске Сăпаңукĕ ђирлĕ выртатЪ, ађисем çамрăк. Пŷртĕнђе те тирпей çук. Ес ун патне кайса йашкасем пĕçерсе пар-ха, ађисене те тирпейле. Ку сан малтанхи ĕçŷ пулĕ.

**Краçук** (*Вирук патне пырса*). Çумккана хăвăртрах хулана кайма хуш. Епĕ çиленес çук. (*КайатЪ*).

## 17-мĕш куранни

**Тарйе.** Краçук пит хытă йĕђĕ-и? Есĕ ăна ђăнах каларăн-и? Пит хуйхăрђĕ пулђĕ-çке.

**Вирук.** Аптăрасах каймĕ, ун тŷсмелĕх пур.

## 28-мĕш куранни.

Марйе, Униççе, 1,2,3,4-мĕш хĕрарăмсем кĕреççĕ.

**Марйе.** Вирук килте-и?

**Вирук.** Килте, килте... сызă çŷретĕр-и?

**Сасӑ.** Сывӑ-ха, Вирӑ Тихӑнавна.

**Вирук.** Мана тархасшӑн апла каласа ан ҫӗнӗр, Вирук тесе ҫӗнӗр. Мӗнле ӗҫпе килтӗр-ха?

1—Маруҫ инке, ес кала-ха.

2—Пурне те кала.

3—Йаҫли уҫас ӗҫпе килтӗмӗр-ҫке.

4—Утӑ ҫийӗ те ҫитрӗ

**Мэрие.** Ҫимӗр-ха, хӗрарӑмсем, ан йанӑрӑрха. Епӗ хам калам-ха. Вирук, утӑ ҫийӗ ҫитет ӗнтӗ, епир каллах аҫасемпе тарӑхса йӗме тытӑнӑпӑр. Пирӗн совегре ӗҫлекенсене есӗ пӑртак калакала-ха. Ех, ӗнтӗ вӗсем те мӗн кӑна шухӑшламаҫҫӗ-ши? Пӗркун йаҫли кирлӗ тесе калаҫрӑмӑр, халӗ ӗҫне тума пӗри те хускалмасӗ. Темӗне кӗтсе тӑраҫҫӗ тата.

1—Камран мӗн ҫухлӗ апатсем пухмаллине те суса кӑларҫӗҫ. Пухаканӗ пӗри ҫук.

2—Арҫынсенҫен ырӑлӑх кӗтесси те ҫук. Ак укҫисене каллах ӗҫсе йарӗҫ.

3—Вӗсен ӗҫӗ те ҫав анҫах. Аҫасемпе вӗсем асапланмаҫҫӗ-ҫке,—вӗсен хуйхи те ҫук.

4—Манӑн арҫыннӑм кула пуҫларӗ. Хӗрарӑмсем ӗҫ тума тытӑнҫӗҫ те, хӑйсем нимӗн те тӑваймаҫҫӗ, тет.

**Униççе.** Ђимĕр-ха, ан йанăрăр.

**Вирук.** Еп ăна хам та пĕлетĕп те, анђах пирĕн пĕр инкек пур. Ађасене епир ăçта пухăпăр-ха, çуртне те ђасах тупаймăпăр. Пурин те пӳрђĕсем пĕђĕкçĕ, ађасене аслăк айĕнђе хăвараймăпăр.

**Марйе.** Арăмсем, еп ак мĕн шухăшлатăп. Ђунăма çылăх илсе калаçам та-ха. Пирĕн пађăшкасем арăмĕпе анђах пурăнаççĕ,—ађисем çук. Вĕсен пӳрђĕ пысăк, ултă пӳлĕмлĕ. Пађăшкана тийаккăн патне куçарма йурамĕ-ши? Тийаккăнăн ҭа çемйи пысăк мар. Пађăшка çуртне вара йасли уçăттăмăр.

1—Апла тума йурĕ-ши?

2—Пуп çуртне-и?

3—Арçынсем памĕç.

4—Тытăнса пăхар-ха.

**Тарйе.** Мĕн есир атапатăр. Вăл ђиркӳ çурђĕ.

**Вирук.** Ђимĕр-ха, Марйе инке шухăшĕ пит аван. Мĕнле-ха епир ăна маларах аса илеймерĕмĕр. Ну, Марйе инке, матур.

**Тарйе.** Ђăнахах та есир ухмаха йертĕр-и? Ара пуп çуртне йепле туртса илмелле?

**Вирук.** Турăран хăратăр-и?

1—Тарйе инке тӗрӗсне калаҭ. Пуп ҫуртне ӑҫтан туртса илен.

**Вирук.** Ђимӗр-ха, еп сире каласа парам. Сирӗн пупӑр халӑха хӗрхенекен ҫын пулсан, вӑл хӑй ҫуртне, вӑхӑтлӑха анђах пулсан та, ађасемшӗн памалла. Ӑна тийаккӑн патӗнђе те вырӑн ҫитмелле. Христос саккунӗ те ырӑ ӗҫ тума хушаҭ. Пуп ађасемшӗн ҫуртне памасан, вӑл вара христос саккунне итлесе пурӑнманни пулаҭ. Ҫитменнине тата пупа кам ҫурт туса панӑ? Пуп ҫуртне хресђенсем тунӑ, ҫавӑнпа ӑна хресђенсемех урӑх ӗҫшӗн илме пултараҫҫӗ. Хаљ пуп ҫуртне йышӑнмасан ађасем валли ҫулталӑксӑр та ҫурт пулмӗ те, вара йаҫли те унђђенех тӑмалла-и? Марйе инке каланӑ пек, пуп ҫуртне йаҫли уҫатпӑр.

1— Арҫынсем памӗҫ.

2— Ак епир ађасене пӑхма арҫынсене хушӑпӑр та, вара арҫынсем мӗн калаҫнине курӑпӑр.

3— Апла хӑрушӑ.

**Марйе.** Мӗн хӑрамалли. Епир арҫынсене—йаҫли уҫма ҫурт памасан, уйа тухса та пӑхмастпӑр тесе хӑратӑпӑр. Ӗҫлеме мар, ҫимелеҫме те каймӑпӑр.

2— Тĕрĕс. Арăмсем, ан парăнăр. Пирĕн уй йалтан 4 çухрăмра, ăçтан епир унтан аҫасем патне çӳрейетпĕр.

**Марйе.** Ав, пĕлтĕр Варуç кин аҫи çунса кайнине вĕсем манҫĕç пуль. Çавсене астутармалла.

**Униççе.** Арçыннусем кутăнланса хĕнесе пĕтерĕç.

1— Вĕсем пире халь тин хĕнемеççĕ ĕнтĕ.

2— Пурне те хĕнесе пĕтерейменĕç.

**ирук.** Ҫимĕр-ха, йулташсем. Епир, хĕрарăмсем, ун çинҫен ушкăнĕпе пухăнса ыйтмалла. Ҫăнахах та, пупа тийаккăн патне ăеатсан, йаçли уçма çурт тупатпăр.

**Тарйе.** Турăран хăрăр.

**Марйе.** Тарйе инке, Краçук аҫине сысна çинни пĕр виç çул иртнĕ пуль ĕнтĕ, астăватна? Хăй уйа кайнă, аҫине хунемĕшпе хăварнă. Леш аҫине курăк çине тухса лартнă та, ăна сысна пырса çисе те йанă. Краçук тӳсеймесĕр шыва та сикме тытăнҫĕ, мĕскĕн, çапах та ухмаха йерсе вилҫĕ, ăна мантăн-им?

**Тарйе.** Ах, ҫăнах та мансах кайнă.

1— Ман аҫам пĕлтĕр пăртакçах ниçсе вилеймерĕ, аран ҫĕртрĕм.

**2**— Аҫасене ăҫтан сыхăсăр хăваран.

**3**— Арăмсем, нимĕн шухăшласа тăмалли те ҫук. Пуп ҫуртне йаҫли уҫатпăрах.

**Вирук**. Урăх калаҫса вăхăт иртерес те мар. Есир килĕрсене кайăр та, стариккĕрсемпе калаҫса пăхăр, епĕ совете кайам. Ҫимĕр-ха, пăртакҫех манса кайман. Хуларан пирĕн аҫасем валли криватсем тума пултăмăр тесе ҫыраҫҫĕ. Аҫасене сыввисене анҫах тухтăра пăхтарса пухăпăр. Вара хамăр пĕрерĕн пăхма пулăпăр. Йурĕ-и?

**Сассăсем**. Йурамасăр, йурат.

**1**—Вирук, ĕҫле-ха ĕнтĕ.

**2**—Епир арҫынсене итлеттерĕпĕр итлеттерĕпĕрех.

**3**—Арăмсене пурне те систерес.

**Марйе**. Пуп кутăнланма тытăнсан, епĕ ăна хамах аллинҫен тытса ҫуртĕнҫен кăларса йарăп.

**Униҫҫе**. Еп Пăнҫука кутăнлансан, хам патма та йамăп.

**Вирук**. Вăхăт ирттерсе тăрар мар ĕнтĕ. Арăмсене систерĕр. Еп совете кайса пуху пухма хушам-ха. Ну, арăмсем, кутăн ан кайăр, хытă тăрăр.

**4**—Йаçли йапалисене сыхлама кама хушар. Ёçми-çими те пулĕ, кипкисем те пулĕç.

**Вирук.** Епир вĕсене сыхлама Кăтаруç Красукне хушăпăр.

**1**—Ара вăл сирĕн Çумккăра кађђа кайаĭ-çке.

**Вирук.** Çумкка хађ хулана ĕçлеме кайаĭ. Вăл йапăхса лариђђен йаçли уçма пулăшĕ.

**2**— Красук сыхласан сыхлатăр.

**3**— Красук вăл çыру та пĕлет, упта çыркаламаллисем те пулĕç.

### 19-мĕш курăнни
(Вирукпа Тарйе анђах йулаççĕ).

**Тарйе.** Ех, арăмсем те. Пур арăмсене те, есĕ Вирук ура çине тăратнă. Тĕлĕнмелле, мĕнле ĕç тума тытăннă.

**Вирук.** Арăмсем еп хăйсем тума тытăннипе тăваççех пуђ тетĕп-ха.

**Тарйе.** Пађăшка вĕсене çуртне памĕ. нимпе те парас çук.

**Вирук.** Пĕђенçи вăл ушкăнах çĕнтереймĕ.

**Тарйе.** Çамрăк ађасем йађĕпе илеççĕ ĕнтĕ, турă каçарĕ-ха. Еп тухса ђĕпсене çиме парам. *(Тухаĭ)*.

**Вирук.** Хулари йулташăмсене пулăшăр тесе çырас-ха, тен пăрахмĕç.

## 20-мĕш курăнни.

**Çумкка** (*кĕрет*). Вирук, еп хăмăта çĕлекелес тесе йĕппе çĕлен çип тирме тытăнтăм та, йĕп куçне çип тирейместĕп. Мĕн пулӈĕ-ши? Йĕп çăрти çине пăхма тытăнап та, куçа тĕтреллĕ курăнаҫ.

**Вирук.** Ӈим-ха, (*кĕнеке тытса*) ме-ха çакăнта мĕн çырнине курайатни?

**Çумкка** (*кĕнеке çине пăхса*). Хуран хуран курăнаҫ, аӈах нимĕнле палла та уйăраймастăп. Ах, Вирук, суккăрланатăп, пулмалла, суккăрланатăп!

**Вирук.** Тата пăх-ха... курмастăн-и?

**Çумкка.** Çук, курмастăп. Вирук, ӈăнахах та суккăр пулăп-ши?

**Вирук.** Емелленмесĕр вăхăт иртерсе пурăннă. Хаӈ ĕнтĕ çав ӈирӳ куçа тухаҫ. Тасамар аллупа та куçна йăвалана пуӈ.

**Çумкка.** Ӈăнахах та суккăр пулатăп пуӈ. Ман пурăнаçа мĕн çĕртсе пурăнас ĕнтĕ малашне. Çакăнса вилетĕп те, ĕçĕ пĕтет.

**Вирук.** Ан ухмахлан, тен ҫӗрӗлӗн. Халех аттепе хулана кай. Тухтăр патне кай та, пурне те йӗркипе ăна каласа кăтарт. Вăтанса каламасăр ан тăр.

**Ҫумкка.** Ҫук, емелленесси кайа йулҫӗ пул, халӗ тин нимӗн те пулăшаймӗ.

**Вирук.** Хăраса ан тăр. Еп аннене кайса калам-ха, вăл сана ҫул ҫине йапаласем хатӗрлетӗр. Укҫине пăртакҫă хам та парăп. Тумлана пуҫла.

**Ҫумкка** (*сулăна, сулăна кайса утса тухат*). Еп ҫӗрӗлеймесев? Тен таврăнаймăп? Сыв пул.

**Вирук** (*вăл тухсан*). Ех тӗттӗмлӗх. Хăйне хăй пӗтерне, ҫитменнине тата урăххисене те пӗтерестӗн пулнă.

*Ҫаршав.*

# ВӐҪҪЁМЁШ ПАЙЁ.

## Ҫав пӳртрех.

### 1-мёш курӑнни.

(Наҫтук тёрё тёрлесе лараҭ, Тарйе кёрет).

**Тарйе.** Наҫтук, хӑҫанҫҫен епё сана кӑшкӑрам-ши? Ҫӑхсем ҫитермелле тетёп.

**Наҫтук.** Ҫим ха, анне, пайан Вирук аппа кайаҭ, еп апӑллийёме те тёрлесе пётерейменёп.

**Тарйе** *(вӳрӑммӑн сывласа)*. Пайан Вирук килни уйӑх ҫурӑ иртрё, анҫах епё халиҫҫен унпа пёрре аван кӑна ларса калаҫаймарӑм. Уйӑх ҫурӑ иртни пёр кун иртнё пек те туйӑнмарё. Мёскёне килге ларма та вӑхӑт пулмарё. Ех, Вирук, Вирук!..

**Наҫтук** *(ёсёклесе)*. Анне, мана ес аппапа хулана йарӑн-и?

**Тарйе.** Есё те кӑйсан, епир кампа йулӑпӑр. Ҫумкка пулнитсӑра выртаҭ. Аҫу та, епё те уҫӑ сывлӑхлӑ мар. Епир вилсен кайӑн, аҫам.

### 2-мёш курӑнни.

**Униҫҫе** *(кёрет)*. Ҫипёр-и, Тарйе инке. Вирук ӑҫта?

**Тарйе.** Сӑпаҫук кинсем патне йулашкинҫен кайса курас терё. Сӑпаҫук кинён те

майа кайни çук, тет. Çавăнпа ăна йулашкинҫен кайса курас терĕ, пайан хĕрĕм какайаҭ ĕнтĕ. Пĕртте йарас килмест.

**Униççе**. Хĕрхенмесĕр. Пире те вăл мĕн ҫухлĕ усă кăтартрĕ. Пирĕн куçа уçса, пире вăл çутă кăтартрĕ. Хĕрарăм ирĕкĕ çинҫен, хĕрарăм тивĕçлĕхĕ çинҫен вăл пире каласа кăтартрĕ. Çавăнпа епир ăна йалĕпех, хулана ан кайтăрҫҫĕ, йала йултăрҫҫĕ тесе ыйтасшăн

**Тарйе**. Ăна епĕ те йулмăн-ши тесе каларăм та, йулмастăп, тет. Унта ман ĕç йулаҭ, тет.

**Наçтук**. Анне, сан тата хĕрлĕ çип пур-и?

**Тарйе**. Урăх çук, мĕн пурне панăҫҫĕ.

**Наçт**. Ман тăвата сасă палли лартма çип çитмерĕ, тем тăвас?

**Униççе**. Акку валли тĕрлетне?

**Наçт**. Вуласа пăх-ха.

**Униççе**. Еп вулама пĕлместĕп çав.

**Наçт**. Хам вуласа парам-ха. (*Вулаҭ*): Йуратнă йулташăма, хамăн аккама йăмăкĕ... ĕнҫен тесе тĕрлеме çип çитмерĕ.

**Униççе**. Ман килте хĕрлĕ çип пурҫҫĕ, анҫах есĕ «йăмăкĕнҫен» тесе тĕрлес вырăнне

«Йӑмӑкӗсенҫен» те, вара пиртен панӑ пек те пулӗ.

**Наҫтук.** Анне, еп халех килетӗп. *(Униҫсепс кайаҫҫӗ).*

**Тарйе.** Пур те хӑйне йуратаҫҫӗ.

### 3-мӗш курӑнни.

**Тихӑн** *(кӗрет)*. Наҫтук ӗҫта ҫупрӗ? Мана пӗртак ҫех йӑвантарса хӑвармарӗ.

**Тарйе.** Униҫҫе патне ҫип ыйтма. Лашана кӗтӳрен илсе килтӗн-и?

**Тихӑн.** Илсе килтӗм Шӑваратӑп та, кӳле пуҫлатӑп. Стантса тӗгтӗмҫен ҫитесҫӗ.

**Тарйе.** Тата хӑҫан килсе курайӗ-ши?

**Тихӑн.** Киле, ӑна пуҫӗпех йарсан, пит аван пулӗҫҫӗ. Епӗ хам хӗрӗм ҫаплах ӑслӑ пулӗ тесе шухӑшламан.

**Тарйе.** Есӗ ӑна ҫурта та йарасшӑн марҫҫӗ. Килсенех ӑна камиссар арӑмӗ тесе мӑшкӑлласа пӑртак ҫех хӗнемерӗн.

**Тихӑн.** Иртнине асӑнса ан лар. Ӗҫсе пуҫа аташтарнипе мар-и?

**Тарйе.** Урӑх ан ӗҫ ӗнтӗ.

**Тихӑн.** Ӗҫместӗп ӗнтӗ. Есӗ епӗ мӗншӗн ӗҫнине пӗлместӗн. Йалти кулаксем пире ӗҫтерсе пайтах ҫаратрӗҫ. Халҫ ӗнтӗ епир,

ҫӗнӗ пуранӑҫ ҫулӗ тупнӑскерсем, туртисене кӗске тыткалӑпӑр. Ӗлӗк Ҫитӑркка самакупнӗ пиҫӗкепе турттарса ӗлкӗрейместҫӗ, халӗ ӗнтӗ вӑл ҫетвӗртне те сутаймасӑр хуйхӑрса ларать.

**Тарйе.** Капла пулни аван-ха вӑл.

**Тихӑн.** Аван пулмасӑр. Вирук кайсан, пире хаҫата вуласа ӑнлантаракан пулмасть ӗнтӗ, ҫав инкек.

**Тарйе.** Наҫтук вулӗ.

**Тихӑн.** Вӑл вулӗ те, ӑнлантараймӗ. Вирук пур сӑмахне те ӑнлантараҫҫӗ. Ав, налук пухакансем хуҫӗсене ӑнланаймасӑр пӗр ерне асапланҫӗҫ. Вирук пырса вуласа ӑнлантарҫӗ.

## 4-мӗш куранни.

**Вирук** *(кӗрет).* Атте, лаша хатӗр-и? Еп йапаласене хатӗрлерӗм. Кӗнекесене сире вулама хӑваратӑп.

**Тихӑн.** Лашана халех кӳлетӗп. Вирук, тата пӗр уйӑха та пулин йулмӑн-ши? Ху та пӑртак канӑттӑн, пире те вӗренткелӗттӗн.

**Вирук.** Ҫук, атте, епӗ урӑх йулма пултараймастӑп. Халҫ те пӗр ерне кайа йултӑм. Пирӗн хапрӑкри ӗҫлекенсене те пурне те уҫота илнӗ.

**Тихăн**. Иулма йурамасан, кайатăнах çав. Есĕ килсенех епĕ сана йатлаçкаланине каçар, ађам. Еп пĕлмесĕр ухмахланнă.

**Вирук**. Çитĕ, атте, епĕ халĕ ес улшăннăшăн темĕн ђухлĕ те хĕпĕртегĕп.

### 5-мĕш курăнни.

**Тихăн**. Еп лаша кулме тухатăп. *(Тухат)*.

**Вирук**. Анне, ес мĕн макран? Ан макăр, ак епĕ пăртак тăрсан, татах килсе кайăп.

**Тарйе**. Ес килнине кĕтсе илеймĕп. Сывлăхăм уçă мар.

**Вирук**. Ман патăма хулана пырса кур.

**Тарйе**. Унта ăçта пырайам. Йлĕк те çӳресех кайман, халђ тин çӳреймĕп ĕнтĕ. Çуртайĕре пăхма та çын кирлĕ. Наçтука есĕ халех илсе ан кай-ха. Еп пĕђђен йепле пурăнăп.

**Вирук**. Ăна вĕрентмесĕр хăварасси? Халђ вăл сире пулăшкаласа пурăнгăр та, анђах еп ăна вăренме илепех.

### 6-мĕш курăнни.

**Наçтук** (*кĕрет*). Вирук килте-и?

**Вирук**. Килте.

**Наçтук**. Ак çакна ил-ха. Кăна еп хам тĕрлерĕм. Шăлăнмассерен мана асăн.

**Вирук** (*ăна тъуп туса*). Тăвах, йăмăкăм. Епир аннепе сана хампа илсе кайасси çинђен калаçрăм та, тата пăртак пурăнтăр терĕмĕр. Еп сана вĕрен...

**Наçтук.** Халех вĕренме йурамасť-и?

**Вирук.** Çук-ха, йурамасť. Пăртакçă тăмалла. (*Наçтук йĕрес пек тăрат*). Йе, ан йĕр, ан йĕр. Епĕ хăравçăсем анђах йĕреççĕ тенине есĕ мантăн-им?

**Наçтук.** Çук, йĕместĕп. (*Куç çулне шăлат*). Лапана тухса курас. (*Тухат*).

## 7-мĕш курăнни.

**Тарйе.** Епĕ сана асăнмалăх мĕн парăпши? Кăкăру çине хĕрес çакас шухăшăм пур та, анђах есĕ турра ĕненмесгĕн.

**Вирук.** Турăсене пĕрне те ĕненместĕп çав.

**Тарйе.** Ах, апла ан кала. Есĕ хуť те мĕн ту та, анђах епĕ ватă ĕнтĕ. Ак ман пăртакçă вак-тĕвек укçам пур, çавна та пулин ил-ха, кирлĕ пулĕ.

**Вирук.** Çук, кирлĕ мар. Ху мĕн те пулсан илĕн.

**Тарйе.** Хушăн илмесен, ме выçă ађасем патне йама ил.

**Вирук.** Йурĕ, анне, йарăп. (*Илет*).

## 8-мёш курăнни.

**Крaçук** *(кĕрет)*. Сана йулашкинђен курма килтĕм. Хађ анђах йаçлинђи ађасене кăнтăрлахи апат çитертĕм.

**Вирук.** Сана мĕн те пулин ĕçлеме хушса хăварас-ха.

**Крaçук.** Хуш. Мĕн тума пултарнине пурне те тăвăп.

**Вирук.** Йаçлинђи ађасен амăшĕсемпе пĕрлерех ĕçлеме тăрăш. Ху мĕн пĕлнине, илтнине пурне те вĕсене каласа пама тăрăш. Хĕлле йаçли хупăнсан, ђиталђнăна ĕçлеме куç. Ытти арăмсене те унта илĕртесшĕн тăрăш. Вĕсене те ĕç тупма пулăш. Вĕсене майĕпе çыру вĕрент, еп килнĕ çĕре вĕсем пайтахăшĕ çыру пĕлђђĕр.

**Крaçук.** Карђăксенђен пуçне ыттисене пурне те вĕрентесшĕн тăрăшăп.

**Вирук.** Есĕ вĕсем патне çуртран çурта çÿресе ађисене тирпейлĕрех тытма вĕрент. Мĕне те пулин ху тума пĕлмесен, пирĕн пата хулана çыр, епир сана пулăшăпăр.

**Крaçук.** Ман пит вĕренес килет.

**Вирук.** Хулара сана вĕренме йурăхлă пĕрпĕр курс уçăлсан еп сана систерĕп.

**Краçук.** Сыв пул-ха, Вирук. Пире манса ан пурăн. (*Ђуптăваççĕ*).

**Вирук.** Телейлĕ ĕçлĕр.

## 9-мĕш курăнни.

**Наçтук** (*ђупса кĕрет*) Вирук. Вирук, сан патна арăмсем килеççĕ.

(*Марйепе пĕрле тăватă арăм кĕреççĕ, вĕсен хыçĕнђе татах арăмсем курăнаççĕ*).

**Марйе.** Вирук, епир сана йулашкинђен курма килтĕмĕр.

**1-мĕш.** Сыв пул, Вирук.

**2-мĕш.** Епир сана ушкăнпех тав тăватпăр

**3-мĕш.** Сана епир ĕмĕрте те манас çук.

**4-мĕш.** Есĕ пиренштен пайтах тăрăшрăн.

**Марйе.** Ђимĕр ха, арăмсем. Униççе, парха хутне. епир унта çыркаланăђђĕ.

**Униççе.** Ме, хытăрах вуласа пар.

**Краçук** (*вулат*). Йуратнă йултапăмăр, Вирук, сана епĕр Куснар йалĕнђи хĕрарăмсем, ђунтан тав тăватпăр. Есĕ ху ĕçусене манса, пире хĕрарăмсене тĕрлĕ инкекре пайтах пулăшрăн. Хаљ ĕнтĕ епир есĕ ђи аван комунискине пĕлтĕмĕр. Сан урлă епир комуниссен парттипе ĕçлесенсене салам йаратпăр.

Есӗ уҫса пана йаҫлиие епир Ленин йатне пама шут турӑмӑр.

Хулари йулташсене краватсемшӗн тав ту. Кӗркунне ҫиттаљнӑ уҫнӑ ҫӗре вӗсем килҫҫӗр. Акӑ хуҫӗ ҫине пилӗк ҫын алӑ пуснӑ, ҫыру пӗлменнисем хӗрес палли лартнӑ.

Салӑсем. Тӗрӗс. Тавах сана Вирук.

Вирук. Сире те мана пулӑшнӑшан тав. Ел мӗн тума пултарнине турӑм. Есӗр ӳпкӑнпа пураннин уссине сисӗн, епӗ пиг савӑнӑттӑм. Пӗрлешсе ӗҫлесен пурӑнаҫа пурӑнма пурне те ҫӑмӑл пулӗ. Пӗрлешсе пурӑнма пултарсан, епӗ сире аван вӗрентрӗм, тийӗгтӗм. Ман асапсем ахалех ҫухалмӗҫҫӗҫ. Епир, хӗрарӑмсем, арҫынсемпе пӗр тивӗҫлӗ пулас тесен, хамӑр алсене аҫасенҫен салтма пӗлмелле. Ҫавӑнпа асапа уҫнӑ йаҫлине ура ҫине тӑратасшӑн тӑрӑшӑр, кӗркуннене ҫиттаљнӑ уҫӑр. Вара арҫыннӑрсем те сӑмакун ӗҫес вырӑнне ҫиттаљнӑра кӗнекесем вуласа иртерӗҫ. Хӑвӑр та вӗренӗр, аҫӑрсене те вӗрентӗр. Кӗнекерен есир пайтах усӑ курӑр. Мӗн те пулин ӑнланмасан, йе тума пӗлмесен, хулари йулташӑрсене ун ҫинҫен пӗлтерӗр. Вӗсем сире ҫиттаљнӑна уҫма пулӑшӗҫ.

**Сасăсем**. Вирук йулташ, сыв пул. Пире вĕрентнĕшĕн сана пысăк тавта-пуç.

**Вирук**. Епĕ хуларан укçа выђаса пилмеллин опликатсиве илтĕм. Епĕ ăна йаçливе хăварăп. Тен çав опликатсипе укçа тухĕ. Вара йаçлине те çав укçапа ура çине тăрататăр.

**Марйе**. Ара сана хăна укçа кирлĕ пулĕ. Ху та пуйанах мар.

**Сасăсем**. Тавта-пуç сана. Епир те сана манмăпăр, парне йарăпăр.

**Тихăн** (*кĕрет*). Лаша хатĕр.

**Вирук**. Апла пулсан епĕ те хатĕр.

**Тарйе**. Сыв пул ĕнтĕ, хĕрĕм. (*Ђуп тăват*). Йулашкинђен çапах та сана куртăм.

**Вирук**. Ей, анне, ес ман пата пайтах çÿрĕн ха. Кайар ĕнтĕ... Еп тата йаçлине кĕрсе тухап-ха.

(*Пурте калаçкаласа тухаççĕ. Стсенă хыçĕнђе сасăсем пусăрăнаççĕ. Стсенă çинђе никам та çук*).

**Настук** (*кĕрет, йĕре-йĕре калаçат*). Урăх йĕрес мар пуљ. (*Пăртак тăрсан*). Епĕ те Вирук пекех пулăп-ха.

*Ђаршав.*

Хакĕ 25 пус.